28-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945 МАРТ 31 ШАМАТКУН 61(6812) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Украинӑри 2-мӗш фронт ҫарӗсен командующине

Совет Союзӗн Маршалне МАЛИНОВСКИЕ

Фронт штабӗн начальникне

Генерал-полковника ЗАХАРОВА

УКРАИНАРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем, наступлени пуҫласа ярса, ГРОН шывӗпе НИТРА шывӗ урлӑ каҫнӑ та, тӑшманӑн ҫав шывсен хӗвеланӑҫ хӗрринчи оборонине татса, 50 километр малалла кайнӑ. КОМАРНО, НОВЫ ЗАМКИ, ШУРАНЫ, КОМЬЯТИЦЫ, ВРАБЛЕ хулисене—нимӗҫсен Братислава хули енчи оборонин вӑйлӑ тӗреклетнӗ пункчӗсене—туртса илнӗ.

Нимӗҫсен оборонине татасшӑн тата КОМАРНО, НОВЫ ЗАМКИ хулисемпе малта асӑннӑ ытти хуласене туртса илесшӗн ҫапӑҫнӑ чухне ҫаксем чапа тухнӑ: ШУМИЛОВ генерал-полковникӑн, МАНАГАРОВ генерал-лейтенантӑн, ПЕТРУШЕВСКИЙ генерал-лейтенантӑн, ЛУКИН генерал-майорӑн, ЯКОВЛЕВ генерал-майорӑн, БИРМАН генерал-майорӑн, АЛЕХИН генерал-майорӑн, КРУЗЕ генерал-майорӑн, ОСТАШЕНКО генерал-майорӑн, ТЕРЕНТЬЕВ генерал-майорӑн, САФИУЛИН генерал-лейтенантӑн, ГРИГОРОВИЧ генерал-майорӑн, МОЛОЖАЕВ генерал-майорӑн, КАРПУХИН генерал-майорӑн, СМИРНОВ генерал-майорӑн, ЛОСЕВ генерал-майорӑн, ОГОРОДОВ генерал-майорӑн, ЗДАНОВИЧ генерал-майорӑн, ПРЕОБРАЖЕНСКИЙ генерал-майорӑн, ГОРБАЧЕВ генерал-майорӑн, ГРЕЧАНЫЙ генерал-майорӑн, ЕСИН генерал-майорӑн, СОБОЛЕВ полковникӑн, МАРОЛЬ полковникӑн, ПАНОВ полковникӑн, ЕРЕМИН полковникӑн, САЛЫЧЕВ полковникӑн, ОРЛОВ полковникӑн, ПЕРЕМАНОВ полковникӑн, СМИРНОВ полковникӑн, БЫСТРОВ майорӑн ҫарӗсем; ПЛИЕВ генерал-лейтенантӑн, СОКОЛОВ генерал-лейтенантӑн, ПИЧУГИН генерал-майорӑн, ГОЛОВСКИЙ генерал-майорӑн, БЕЛОУС генерал-майорӑн, ШМУЙЛО генерал-майорӑн, ХРУСТАЛЕВ генерал-майорӑн, ПАВЛОВ генерал-майорӑн, ГАГУА полковникӑн, РЕВА полковникӑн кавалерисчӗсем; ХОЛОСТЯКОВ контр-адмиралӑн, 1-мӗш рангри капитанӑн СВЕРДЛОВАН, 2-мӗш рангри капитанӑн АРЖАВКИНАН, 2-мӗш рангри капитанӑн ДЕРЖАВИНАН, САВИЦКИЙ капитан-лейтенантӑн, ПАСМУРОВ майорӑн морякӗсем; артиллери генерал-полковникӗн ФОМИНАН, артиллери генерал-лейтенанчӗн КУМЕЛАНАН, артиллери генерал-лейтенанчӗн ДЕРЕШАН, артиллери генерал-лейтенанчӗн ПЕТРОВАН, артиллери генерал-майорӗн ШМАКОВАН, артиллери генерал-майорӗн ЗЫКОВАН, артиллери генерал-майорӗн ПОПОВИЧАН, МАРЧЕНКО полковникӑн, МАКАРОВ полковникӑн, НЕКРАСОВ полковникӑн, ГУЩИН полковникӑн, АДАШЕВ полковникӑн, ПАСТУХ полковникӑн, БОГУШЕВИЧ подполковникӑн, ВЛАДИМИРОВ полковникӑн, ЛЮБИМОВ подполковникӑн, ШУБНЫЙ полковникӑн, КЛЕЙМАНОВ подполковникӑн, ЛЯМЗИНСКИЙ майорӑн, КОСТЫЛЕВ майорӑн, ПАВЛИК подполковникӑн, КОЗАРЕНКО полковникӑн, КИСЛЫЙ подполковникӑн, ДЕНИСЕНКОВ подполковникӑн, ТРОШЕВ подполковникӑн, САМЧЕНКО подполковникӑн, ЛЕОНТЬЕВ подполковникӑн, РОЖЕМАНОВ майорӑн, ПОПЛЫКО подполковникӑн, ЕВЛИН подполковникӑн, ПОДОПРИГОРА майорӑн, БАРХАТОВ майорӑн артиллерисчӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-полковникӗн КУРКИНАН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӑн БОГДАНОВАН, СУПЯН полковникӑн, ЛЕЙБМАН подполковникӑн, БРИЖИНЕВ полковникӑн, АНТОНОВ полковникӑн, ТУРЧИН майорӑн, СЕВРЮКОВ майорӑн, БЕЛОУСОВ майорӑн, ГАПОНЕНКО майорӑн, ПОДЛЕСНЫЙ подполковникӑн, ШАЛК подполковникӑн, МОРОЗ подполковникӑн, ГОНЧАРУК полковникӑн танкисчӗсем; авиаци генерал-полковникӗн ГОРЮНОВАН, авиаци генерал-лейтенанчӗн СЕЛЕЗНЕВАН, авиаци генерал-лейтенанчӗн СТЕПИЧЕВАН, авиаци генерал-майорӗн КАМАНИНАН, авиаци генерал-лейтенанчӗн ПОДГОРНЫЙАН, РУББЕ полковникӑн, ЧАНПАЛОВ полковникӑн, ЧИЖИКОВ полковникӑн, ШУТЕЕВ полковникӑн, ТАРАНЕНКО полковникӑн, ЮДАКОВ полковникӑн, ЕРЕМЕНКО подполковникӑн, САПРЫКИН полковникӑн, КЛОБУКОВ полковникӑн, СЕМЕНЕНКО полковникӑн, ЛОЗЕНКО полковникӑн, БЕРМАН подполковникӑн, БАЛАБАН майорӑн летчикӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн ЦИРЛИНАН, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ТУПИЧЕВАН, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ПЛЯСКИНАН, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ВАСИЛЬЕВАН, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ТЮЛЕВАН, БАДАЕВ подполковникӑн, ИСАЕВ полковникӑн, ЦЕПЕНЮК полковникӑн, НАСОНОВ полковникӑн, АНЗАУРОВ подполковникӑн, МЯСНИКОВ полковникӑн саперӗсем; ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн ЛЕОНОВАН, МАКАРЕНКО полковникӑн, БОРИСЕНКО полковникӑн, ШИШЕЛОВ майорӑн, ВОЛЧУКОВ майорӑн, СОКОЛОВ майорӑн, государство хӑрушсӑрлӑх полковникӗн КАРПОВАН связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, нимӗҫсен оборонине татасшӑн тата КОМАРНО, НОВЫ ЗАМКИ тата малта асӑннӑ ытти хуласене туртса илесшӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, мартӑн 30-мӗшӗнче, 20 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, икҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, Украинӑри 2-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, нимӗҫсен оборонине татса малта асӑннӑ хуласене туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, нимӗҫсен оборонине татасшӑн тата малта асӑннӑ хуласене ирӗке кӑларасшӑн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТАВАТАП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1945 ҫулхи мартӑн 30-мӗшӗ. № 318.

Совет Информаци Бюровӗнчен

МАРТӐН 29-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

БЕЛОРУССИРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем мартӑн 29-мӗшӗнче нимӗҫ ҫарӗсен Хӗвелтухӑҫ Пруссири КЕНИГСБЕРГ хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре ҫавӑрса илнӗ ушкӑнне пӗтерсе тӑкас ӗҫе вӗҫленӗ. Мартӑн 13-мӗшӗпе 29-мӗш хушшинчи ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 50.000 ҫын ытла тыткӑна лекнӗ, 80.000 ҫын вилнӗ, ҫакӑнпа пӗрлех фронт ҫарӗсем нимӗҫсенчен ҫакӑн пек трофейсем тытса илнӗ: самолетсем—128, танксемпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑсем—605, хир тупписем—3.500 ытла, минометсем—1.440, пулеметсем—6.447, бронетранспортерсем—386, радиостанцисем—247, автомашинӑсем — 35.060, тракторсемпе тягачсем—474, паровозсем—232, чугун ҫул вагонӗсем—7.673, боеприпас, хӗҫпӑшал, апат-ҫимӗҫ тата ытти ҫар пурлӑх склачӗсем—313.

БЕЛОРУССИРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем ГДАНЬСК (ДАНЦИГ) хулин хӗвелтухӑҫ пайне тӑшмантан тасатасшӑн ҫапӑҫнӑ, ГДЫНЯ хулинчен ҫурҫӗртерехре Данциг бухти хӗррипе хӗстерсе лартнӑ нимӗҫ ҫарӗсен ушкӑнне пӗтерсе пынӑ. Мартӑн 28-мӗшӗнче пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче ку районра фронт ҫарӗсем 18.500 нимӗҫ салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ тата ҫакӑн пек трофейсем тытса илнӗ: самолетсем—50, танксемпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑсем—67, хир тупписем—369.

УКРАИНАРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем, ҫав тери хӑвӑрт наступлени туса пырса, мартӑн 29-мӗшӗнче СОМБАТЕЛЬ тата КАПУВАР хулисемпе ҫулсен паха узелӗсене туртса илнӗ те, КЕСЕГ хулине йышӑнса, Австри чиккине тухнӑ, ҫавӑн пекех тата, тӑшманна ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан ытти 100 пункта ытла йышӑннӑ, вӗл шутра—ФАРАД, МИХАЛЬИ, БЕЛЕД, ЧАНИГ, БЮК, НАДЬГЕНЧ, ВЕП, ПЕЦЕЛЬ, ИКЕРВАР, ДЬЕРТЬЯНОШ, БАЛТАВАР, ЗАЛАСАНТО РЕЗИ ятлӑ пысӑк ялсем тата ТОТКЕРЕСТУР, БЕЛЕД, РЕПЧЕ-ЛАК, ХЕДЬФАЛУ, БЮК чугун ҫул станцийӗсем. Мартӑн 28-мӗшӗпе 29-мӗшӗнче пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче фронт ҫарӗсем, малтанлӑха палӑртнӑ тӑрӑх, тӑшманӑн 18.000 салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ тата ҫакӑн пек трофейсем тытса илнӗ: самолетсем—115, танксемпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑсем—71, хир тупписем—182.

Фронтӑн ытти участокӗсенче тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ тата разведчиксем шыраса ҫӳренӗ.

Мартӑн 28-мӗшӗнче мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 98 танкӗпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен туппине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитлӑ артиллери тӑшманӑн 23 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

ПИРӖН АВИАЦИ ВЕНГРИРИ ШОПРОН ХУЛИНЕ ПЫРСА ТАПАННИ

Мартӑн 29-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн йывӑр бомбардировщиксем Венгрири Шопрон чугун ҫул узелне пырса ҫапнӑ. Бомбӑсем пӑрахнипе пула, узел территорийӗнче пушарсем тухнӑ. Пушарсенче взрывсем пулнӑ. Тул ҫутӑлса килнӗ тӗлелле Шопрон чугун ҫул узелне талккӑшӗпех вут хыпса илнӗ. Тӑшман эшелонӗсемпе ҫар склачӗсем ҫуннӑ.

ВЦСПС-ӑн XIII-мӗш пленумӗ

Мартӑн 29-мӗшӗнче ВЦСПС-ӑн XIII-мӗш пленумӗ кун йӗркинчи виҫҫӗмӗш ыйтӑва—профсоюзсен Лондонра пулса иртнӗ Пӗтӗм тӗнчери конференцийӗн итогӗсем ҫинчен сӳтсе-явма тытӑннӑ. Доклад тума сӑмах ВЦСПС председательне, Лондонри конференцири Совет профсоюзӗсен делегацийӗн пуҫлӑхне В. В. Кузнецов юлташа панӑ.

Кузнецов юлташӑн доклачӗ тӑрӑх пренисем пуҫланнӑ. Пренире тухса калакансем профсоюзсен пӗтӗм тӗнчери конференцийӗн решенийӗсене ырланӑ, профсоюз организацийӗсен тӗп задачи—гитлерла Германие тӗппренех аркатса тӑкас вӑхӑта ҫывхартмашкӑн ирӗклӗхе юратакан халӑхсене вӑрҫӑ ӗҫӗнче пулӑшасси пулать, тесе асӑрхаттарнӑ.

В. В. Кузнецов юлташӑн доклачӗ тӑрӑх резолюци хатӗрлеме пленум комисси суйласа хӑварнӑ. (ТАСС).

КУБАНЬРИ КОЛХОЗНИКСЕМ 500.000 ГЕКТАР ҪӖРЕ МИНАСЕНЧЕН ТАСАТНӐ

Кубань ҫӗре тӑрӑх нимӗҫсен оборонин «Сеннер линии» текен линийӗ выртнӑ. Темиҫе пин гектар ҫӗре тӑтӑшах минӑсем лартса тухнӑ пулнӑ. Казак-колхозниксем хӑйсен вӑйӗпе 500.000 гектар ҫӗре минӑсенчен тасатнӑ. (ТАСС).

РСФСР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне пани

Мартӑн 27-мӗшӗнче Шупашкарта апат-ҫимӗҫ промышленность работникӗсен канашлӑвӗ пулчӗ. Канашлӑва Чӑваш АССР Совнаркомӗн председателӗ А. Матвеев юлташ уҫрӗ.

Чӑваш АССР Апат-ҫимӗҫ промышленность Халӑх Комиссарӗ П. Калинкина юлташ Чӑваш ресупликинчи апат-ҫимӗҫ промышленноҫӗн 1945 ҫулхи 1-мӗш кварталти ӗҫӗсем ҫинчен доклад туса пачӗ.

— Районсемпе хуласенчи апат-ҫимӗҫ комбиначӗсенчен чылайӗшӗсем 1945 ҫулта тикӗс ӗҫлеҫҫӗ, производство программине ӑнӑҫлӑн тултарса пыраҫҫӗ,—тет докладчик. — Районри промышленность февраль уйӑхӗнчи задание 155,6 процент тултарнӑ. Ҫирӗплетсе панӑ 9 ассортиментран 8-шӗ енӗпе продукци туса кӑларнӑ. Ҫак ӗҫсемпе Чӑваш АССР Совнаркомӗ РСФСР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне илме тивӗҫлӗ пулчӗ. Пирӗн апат-ҫимӗҫ промышленноҫӗнчи работниксем, ҫак пысӑк наградӑпа хавхаланса, март уйӑхӗнче татах та лайӑхрах ӗҫлерӗҫ. Мартӑн 20-мӗшӗ тӗлне районсенчи апат-ҫимӗҫ промышленноҫӗ хӑйӗн кварталти программине тултарчӗ.

Ҫуракине хатӗрленнӗ вӑхӑтра апат-ҫимӗҫ промышленность работникӗсем умӗнче ответлӑ задачӑсем тӑраҫҫӗ. Ҫитес ҫуракинче апат-ҫимӗҫ комбиначӗсен 400 гектар ҫӗр лаптӑкӗ ҫинче тырпул, пахча-ҫимӗҫ тата ытти культурӑсем акса хӑвармалла.

Калинкина юлташ доклачӗ тӑрӑх прение Вӑрмар районӗнчи апат-ҫимӗҫ комбиначӗн директорӗ Михайлов, Канаш хулинчи апат-ҫимӗҫ комбиначӗн директорӗ Захватова, Сӗнтӗрвӑрринчи апат-ҫимӗҫ комбинатӗнчи стахановка Левшина юлташсем тухса каларӗҫ.

Канашлу вӗҫленес умӗн Чӑваш АССР Совнаркомне РСФСР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне пачӗҫ.

РСФСР Апат-ҫимӗҫ промышленность Халӑх Комиссарӗн заместителӗ Паршиков юлташ, Хӗрлӗ Ялава парса, Чӑваш республикинчи апат-ҫимӗҫ работникӗсене малашне ӗҫе татах та вӑйлатма, продукци туса кӑларассине ӳстерме чӗнсе каларӗ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗн Председателӗ Матвеев юлташ, куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялава илсе, пирӗн республикӑри апат-ҫимӗҫ промышленноҫӗнчи работниксене ҫав награда ҫине ӗҫре ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем тунипе ответлеме чӗнчӗ.

Канашлура пулнисем Сталин юлташ патне ҫыру яма пысӑк ҫӗкленӳпе йышӑнчӗҫ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Белоруссири 2-мӗш фронт ҫарӗсен командующине

Совет Союзӗн Маршалне РОКОССОВСКИЕ

Фронт штабӗн начальникне

Генерал-полковника БОГОЛЮБОВА

БЕЛОРУССИРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем нимӗҫсен Данциг патӗнчи группине ҫӗмӗрсе тӑкас ӗҫе вӗҫленӗ те паян, мартӑн 30-мӗшӗнче, ГДАНЬСК (ДАНЦИГ) хулипе крепоҫне—питӗ пысӑк порта тата нимӗҫсен Балтика тинӗсӗ хӗрринчи питех те паха тинӗс-ҫар базине — штурмласа туртса илнӗ.

ГДАНЬСК хули ҫине ПОЛЬША государствин наци флагне ҫӗклесе лартнӑ.

ГДАНЬСК хулишӗн ҫапӑҫнӑ чухне фронт ҫарӗсем нимӗҫсен 10.000 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ, ҫавӑн пекех тата 140 танкпа хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑ, 358 хир тупӑ, шыв айӗпе ҫӳрекен 45 кимӗ тата ытти хӗҫпӑшалсемпе ҫар пурлӑхӗ нумай тытса илнӗ.

ГДАНЬСК хулипе крепоҫне туртса илесшӗн ҫапӑҫнӑ чухне ҫаксем чапа тухнӑ: ФЕДЮНИНСКИЙ генерал-полковникӑн, БАТОВ генерал-полковникӑн, ГРИШИН генерал-полковникӑн, ПОПОВ генерал-полковникӑн, КОКОРЕВ генерал-лейтенантӑн, БОБКОВ генерал-лейтенантӑн, КИНОСЯН генерал-майорӑн, ПЕНЧЕВСКИЙ полковникӑн, ХАБАРОВ генерал-майорӑн, АНИСИМОВ генерал-лейтенантӑн, ПОЛЕНОВ генерал-лейтенантӑн, ФЕТИСОВ генерал-майорӑн, ЧУВАКОВ генерал-майорӑн, ЭРАСТОВ генерал-лейтенантӑн, АЛЕКСЕЕВ генерал-лейтенантӑн, ТЕРЕНТЬЕВ генерал-лейтенантӑн, СМИРНОВ генерал-майорӑн, ДРАТВИН генерал-лейтенантӑн, РЯБЫШЕВ генерал-лейтенантӑн, СОННИКОВ полковникӑн, ЯКУШЕВ генерал-майорӑн, КУРЕНЬ полковникӑн, БОРЩЕВ генерал-майорӑн, ЛЯШЕНКО генерал-майорӑн, ДЕМИДОВ генерал-майорӑн, ЧЕСНОКОВ полковникӑн, КОЛЧАНОВ генерал-майорӑн, ГРЕБЕННИК генерал-майорӑн, РАХИМОВ генерал-майорӑн, МАКАРОВ генерал-майорӑн, ТЕРЕМОВ генерал-майорӑн, ВЕЛИЧКО полковникӑн, БОРИСОВ генерал-майорӑн, ДЖАНДЖГАВА генерал-майорӑн, АФАНАСЬЕВ полковникӑн, КИРИЛЛОВ генерал-майорӑн, КРАСНОШТАНОВ генерал-майорӑн, СУПРУНОВ генерал-майорӑн, ПАЧКОВ полковникӑн, КОНОНЕНКО генерал-майорӑн, ГОРИЧЕВ полковникӑн, ШЕПЕЛЬ полковникӑн, ГУСЕВ генерал-майорӑн, МЕЛЬДЕР полковникӑн, КАРПЕЛЮК полковникӑн, КИРСАНОВ генерал-майорӑн, ТИМОФЕЕВ генерал-майорӑн, ТРУДОЛЮБОВ полковникӑн, БЕЛЯЕВ полковникӑн, МУРАТОВ полковникӑн, МЕЛЬНИКОВ подполковникӑн ҫарӗсем; артиллери генерал-полковникӗн СОКОЛЬСКИН, артиллери генерал-лейтенанчӗн ДЕГТЯРОВАН, артиллери генерал-майорӗн КАРЕНИНАН, артиллери генерал-майорӗн КАЗАКОВАН, артиллери генерал-майорӗн ДМИТРИЕВАН, артиллери генерал-майорӗн РАЗИНЦЕВАН, артиллери генерал-лейтенанчӗн БЕСКИНАН, артиллери генерал-майорӗн ПЯДУСОВАН, артиллери генерал-майорӗн РОГОЗИНАН, артиллери генерал-майорӗн МАЛОФЕЕВАН, ГНИДИН полковникӑн, ШЛЕПИН полковникӑн, АКИМУШКИН полковникӑн, ЛЕОНОВ полковникӑн, БАРМОТИН полковникӑн, ТЮРИН полковникӑн, МАЛЯВСКИЙ полковникӑн, РЫБКИН полковникӑн, ВАСИЛЕНКО полковникӑн, СУКАЧЕВ полковникӑн, КОРОЛЕВ полковникӑн, СУХУШИН полковникӑн, ДЕГТЯРЕНКО полковникӑн, ВОЛКОВ полковникӑн, НЕСВЕТАЙЛО полковникӑн, КОРОТКИХ полковникӑн, артиллери генерал-майорӗн ПЕТРОВАН, КАМИНСКИЙ полковникӑн, ДРАБКОВ полковникӑн артиллерисчӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн ЧЕРНЯВСКИЙӖН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ПАНОВАН, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн ПАНФИЛОВАН, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн ПОПОВАН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ФИРСОВИЧАН, МИРОНОВИЧ полковникӑн, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн НОВАКАН танкисчӗсем, Польшӑн 1-мӗш ҫарӗн ПОПЛАВСКИЙ генерал-лейтенант ертсе пыракан танкисчӗсем, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ПЕТРУШИНАН, ЮДИН полковникӑн, МАЛЮТИН полковникӑн, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн МАЛЫШЕВАН, ИГОНИН полковникӑн танкисчӗсем; авиаци генерал-полковникӗн ВЕРШИНИНАН, авиацин Главнӑй Маршалӗн ГОЛОВАНОВАН, авиаци генерал-полковникӗн САМОХИНАН, авиаци генерал-майорӗн АЛЕКСЕЕВАН, авиаци генерал-лейтенанчӗн ПЕРМИНОВАН, авиаци генерал-лейтенанчӗн БАЙДУКОВАН, авиаци генерал-лейтенанчӗн ОСИПЕНКАН, авиаци генерал-майорӗн БОРИСЕНКАН, авиаци генерал-лейтенанчӗн ТУПИКОВАН, авиаци генерал-лейтенанчӗн ЛОГИНОВАН, авиаци генерал-лейтенанчӗн НЕСТЕРЦЕВАН, авиаци генерал-лейтенанчӗн СЧЕНЧИКОВАН, авиаци генерал-майорӗн ГЕТЬМАНАН, ВОЛКОВ полковникӑн, ВУСС полковникӑн, ОСИПОВ полковникӑн, ЯКУШИН полковникӑн, РЫБАКОВ полковникӑн, СМОЛОВИК полковникӑн, КАЛУГИН полковникӑн, ТИХОМИРОВ полковникӑн, ПОКАЕВОЙ полковникӑн, ПУШКАРЕВ полковникӑн, авиаци генерал-майорӗн БАЛАШОВАН, авиаци генерал-майорӗн ЧЕМОДАНОВАН, авиаци генерал-майорӗн ДРЯНИНАН, авиаци генерал-майорӗн НАБОКОВАН, авиаци генерал-майорӗн ЩЕРБАКОВАН, авиаци генерал-майорӗн ШИРОКИЙӖН, авиаци генерал-майорӗн БРОВКОН, авиаци генерал-майорӗн КАРТАКОВАН, авиаци генерал-майорӗн ГЛУЩЕНКОВАН, авиаци генерал-майорӗн БЛИНОВАН, авиаци генерал-майорӗн МЕНЬШИКОВАН, авиаци генерал-майорӗн ЛЕБЕДЕВАН, КОЖЕМЯКИН полковникӑн летчикӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн БЛАГОСЛАВОВАН, КУРОВ полковникӑн, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ШВЫДКОЙАН, ТРЕТЬЯКОВ полковникӑн, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ВИТВИНИНАН саперӗсем; ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-майорӗн БОРЗОВАН, ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-майорӗн НОВАРЧУКАН, БАХИЛИН полковникӑн, БОРИСОВ полковникӑн, ПРОЦЕЛОВ подполковникӑн, ВОЛОДКЕВИЧ полковникӑн связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, ГДАНЬСК хулипе крепоҫне туртса илесшӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене «ГДАНЬСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, мартӑн 30-мӗшӗнче, 22 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, икҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, Белоруссири 2-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, ҫав шутрах Польшӑн 1-мӗш ҫарӗн ПОПЛАВСКИЙ генерал-лейтенант ертсе пыракан танкисчӗсене, ГДАНЬСК хулипе крепоҫне туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, ГДАНЬСК хулине ирӗке кӑларассишӗн ҫапӑҫнӑ ҫӗрте пулнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТАВАТАП.

Совет Союзӗн тата Польшӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1945 ҫулхи мартӑн 30-мӗшӗ. № 319.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Украинӑри 3-мӗш фронт ҫарӗсен командующине

Совет Союзӗн Маршалне ТОЛБУХИНА

Фронт штабӗн начальникне

Генерал-лейтенанта ИВАНОВА

УКРАИНАРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем, БАЛАТОН кӳллинчен хӗвеланӑҫнелле малалла наступлени туса пырса, паян, мартӑн 30-мӗшӗнче, ЗАЛАЭГЕРСЕГ тата КЕСТЕЛЬ хулисене туртса илнӗ.

Ҫакӑнпа пӗр вӑхӑтрах фронт ҫарӗсем, Болгари ҫарӗсемпе пӗрле кӗрешсе, БАЛАТОН кӳллинчен кӑнтӑртарахра тӑшман оборонине татса кӗнӗ те, 30 километра ҫити малалла кайса, НАДЬБАЙОМ, БЕГЕНЕ МАРЦАЛИ тата НАДЬЯТАД хулисене — нимӗҫсен оборонин НАДЬКАНИЖА таврашӗнчи нефть районне хӳтӗлесе тӑракан вӑйлӑн тӗреклетнӗ пункчӗсене—туртса илнӗ.

Нимӗҫсен оборонине татса кӗресшӗн тата ЗАЛАЭГЕРСЕГ, КЕСТЕЛЬ тата малта асӑннӑ ытти хуласене туртса илесшӗн ҫапӑҫнӑ чухне ҫаксем чапа тухнӑ: ТРОФИМЕНКО генерал-полковникӑн, ШАРОХИН генерал-лейтенантӑн, болгарсен ҫарӗн СТОЙЧЕВ генерал-лейтенанчӗн, ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-майорӗн БРАГИНАН, ВЕРХОЛОВИЧ генерал-майорӑн, СЕМЕНОВ генерал-майорӑн, КОЛЧУК генерал-майорӑн, БЛАГОДАТОВ генерал-майорӑн, КРАВЦОВ генерал-майорӑн, АРТЮШЕНКО генерал-майорӑн, БУНЯШИН генерал-майорӑн, ТРАВНИКОВ генерал-майорӑн, ТОЩЕВ генерал-майорӑн, ДРЕМЕНКОВ полковникӑн, ГОРОБЕЦ полковникӑн, ХАДЖИ ИВАНОВ полковникӑн, ХОХЛОВ полковникӑн, БУРИК полковникӑн, ЧЕБОТАРЕВ полковникӑн, ПИСКУНОВ полковникӑн, ПЕТРУШИН полковникӑн, ЩЕРБЕНКО полковникӑн, НАЙДЫШЕВ полковникӑн, ТАРАЛЕШКОВ полковникӑн, ХУБЕНОВ полковникӑн ҫарӗсем; артиллери генерал-полковникӗн НЕДЕЛИНАН, артиллери генерал-майорӗн БРЕЙДАН, артиллери генерал-майорӗн ЛЕБЕДЕВАН, артиллери генерал-майорӗн БОБРОВНИКОВАН, ПЕТРОВ полковникӑн, ФЕДОРОВ полковникӑн, ГОЦАК полковникӑн, СИНИЦИН полковникӑн, ГУЩИН полковникӑн, ПРИСТРУЖАК полковникӑн, МАРКОВ полковникӑн, ПОПОВ полковникӑн, ЗАГОРОВ полковникӑн, МИЛУШЕВ полковникӑн, НЕЧАЕВ подполковникӑн, КОРОВИН подполковникӑн, СНЫТИН подполковникӑн, ВЛАСЕНКО подполковникӑн, ШПЕК подполковникӑн, ХАДЖИЕВ майорӑн, КУЗЬМЕНКО майорӑн, СИЛКИН капитанӑн артиллерисчӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ПАВЕЛКИНАН, ГОВОРУНЕНКО генерал-майорӑн, ЧУНИХИН полковникӑн, ИНДЕЙКИН полковникӑн, ГОРЧИНСКИЙ полковникӑн, ЛУКЬЯНОВ полковникӑн, СТЫЗИК полковникӑн, ШЕВЧЕНКО подполковникӑн, САВКИН подполковникӑн танкисчӗсем; авиаци генерал-полковникӗн СУДЕЦАН, авиаци генерал-майорӗн БЕЛИЦКИЙӖН, авиаци генерал-майорӗн КОРСАКОВАН, авиаци генерал-майорӗн ТИЩЕНКАН, ДЕМЕНТЬЕВ полковникӑн, УЛЬЯНОВСКИЙ полковникӑн, НЕДОСЕКИН полковникӑн летчикӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-полковникӗн КОТЛЯРАН, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ГОЛДОВИЧАН, ПАВЛЕНКО полковникӑн, ПОНИМАШ полковникӑн, НОВИКОВ майорӑн саперӗсем; ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн КОРОЛЕВАН, СТАРОЛЕТОВ полковникӑн, АГАФОНОВ полковникӑн, КАРАНЬ майорӑн связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, нимӗҫсен оборонине татса кӗресшӗн тата ЗАЛАЭГЕРСЕГ, КЕСТЕЛЬ тата малта асӑннӑ ытти хуласене туртса илесшӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, мартӑн 30-мӗшӗнче, 23 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, икҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, Украинӑри 3-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, ҫав шутрах Болгарин СТОЙЧЕВ генерал-лейтенант ертсе пыракан ҫарне, нимӗҫсен оборонине татса кӗнӗскерсене тата малта асӑннӑ хуласене туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, нимӗҫсен оборонине татса кӗресшӗн тата малта асӑннӑ хуласене туртса илесшӗн ҫапӑҫнӑ ҫӗрте пулнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТАВАТАП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1945 ҫулхи мартӑн 30-мӗшӗ. № 320.

Вăрçă вăхăтĕнчи тăваттăмĕш çуракине кăтартуллăн хатĕрленсе кĕтсе илессишĕн, çĕнтерӳ тырпулĕшĕн социализмлă ăмăртăва анлăнрах сарса пырар!

Чăваш республики 25 çул тултарнă ятпа пыракан ăмăртăва хутшăнаççĕ

Çĕрпӳ районĕнчи пур колхозсенче те çак кунсенче колхозниксемпе колхозницăсен пухăвĕсем пулса иртеççĕ. Вăл пухусенче ВКП(б) райкомĕн представителĕсемпе ялти агитаторсем ялхуçалăх работникĕсен республикăри канашлăвĕ чĕнсе калание ăнлантарса параççĕ. «Красная Армия», «Ĕмĕт», «Звезда», «Парижская Коммуна», «Пионер» колхозсенче пухусем пулса иртнĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем, ялхуçалăх работникĕсен республикăри канашлăвĕ чĕнсе каланине ырласа, конкретлă обязательствăсем илнĕ тата Чăваш республики 25 çул тултарнă ятпа пуçланса кайнă социализмлă ăмăртăва хутшăнма йышăннă.

Кăшаркассинчи «Пионер» колхозăн клубне колхозниксемпе колхозницăсем 400 çын ытла пухăннă.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Свешников юлташ пухура тĕнчери лару-тăру тата Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенчи ĕçсем çинчен доклад туса панă. Колхозниксемпе колхозницăсем доклада пысăк тимлĕхпе итленĕ, нумай ыйтусем панă.

Иккĕмĕш ыйтупа республикăри ялхуçалăх работникĕсен канашлăвĕ чĕнсе калание сӳтсе явнă. Çак ыйту тăрăх пурĕ 8 çын тухса каланă. В. Тимофеева, М. Степанова колхозницăсем республикăри ялхуçалăх работникĕсем чĕнсе каланинче палăртнă обязательствăсене кашни колхозрах пурнăçлама май пурри çинчен каланă.

— Çак обязательствăсене,—тенĕ В. Иванова колхозница,—эпир нумай ирттерсе пурнăçлама пултаратпăр, ку тĕлĕшпе кашни колхозник ывăнма пĕлмесĕр, ăмăртса ĕçлени кăна кирлĕ.

Колхозниксем çак пухура çуракине ирттермелли ĕç планне пăхса тухса çирĕплетнĕ.

«Пионер» колхоз членĕсем юлса пыракан колхозсене пулăшас майпа 120 пăт вăрлăхлăх тырă пама йышăннă. Çак тырра вĕсем Заготзерно складне леçсе панă. Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, колхозниксемпе колхозницăсем государствăна обязательство тăрăх аш-какай памалли плана майăн 1-мĕшĕччен тултарма пулнă.

Пухусем пур колхозсенче те пысăк çĕкленӳпе, активлăн пулса иртеççĕ.

* * *

КАЛИНИНО. Чăваш республикинчи ялхуçалăх работникĕсен канашлăвĕ чĕнсе калание колхозниксемпе колхозницăсене ăнлантарса пама ВКП(б) Калинино райкомĕ районри чи лайăх агитаторсене 20 çынна уйăрнă. Вĕсемпе ятарласа канашлу ирттернĕ. Халĕ çак агитаторсем колхозсене тухса кайнă. Районри пур колхозсенче те ĕнер тата паян колхозниксен пухăвĕсем иртеççĕ.

Çуракине колхозсем мĕнле хатĕрленсе çитнине пур енчен те тĕрĕслеме ВКП(б) райкомĕпе райисполком 10 комисси организациленĕ. Кашни комиссие ВКП(б) райкомĕн членĕ е райсовет исполкомĕн депутачĕ ертсе пырать. Комисси членĕсен шутĕнче агрономсем, зоотехниксем тата ветеринарсем пур. Çуракине хатĕрленсе çитнине тĕрĕслекен комиссисем хăйсен ĕçне апрелĕн 5-мĕшĕччен пĕтĕмĕшпех вĕçлемелле.

Малта пыракан колхозра

ОКТЯБРЬСКОЕ. (Хамăр корр.). Услă Пукашри Сталин ячĕпе тăракан колхозра çуракине лайăх хатĕрленеççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем, вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене пăхмасăрах, кашни гектартан 100-шер пăт тĕштырă туса илессишĕн тăрăшаççĕ.

Ку колхоз иртнĕ çул та начар мар ĕçленĕ. Çуракине лайăх хатĕрленсе, вăхăтра та пахалăхлăн ирттернĕ. Çавна пула гектартан 14 центнер урпа, 12 центнер сĕлĕ туса илнĕ. Ытти культурăсем те начар пулман. Уйрăмах юнта клевер тухăçлă пулнă. Колхозниксем, агротехникăна çирĕп пурнăçа кĕртсе пырса, 3.5 гектартан 4 центнер клевер вăрлăхĕ туса илнĕ. Халĕ вĕсем хăйсен ытлашши вăрлăхне кӳршĕри колхозсене сутрĕç.

Колхозăн пур культурăсен вăрлăхĕ те çителĕклĕ. Тулă, пăрса тата вика вăрлăхĕсене планран ирттерсе хатĕрленĕ. Вăрлăх фондне Е. Арсентьева младовщик аллине акт тăрăх панă. Вăрлăхсене типĕ складсене хунă, вĕсен шăтас пахалăхĕ аван. Ялхуçалăх машинисене юсаса пĕтернĕ. Колхоз тимĕрçи С. Сотнезов пĕр пĕччен 12 плуг, сеялка тата 16 сӳре юсанă. Халĕ вăл тырă вырмалли машинăсене юсать. Çавăн пекех колхозăн ут таврашĕсемпе транспорт инвентарĕ те юсавлă, вĕрен-пăявсем кирлĕ чухлех пур. Вĕсене конюхсем тĕрĕслесе тăраççĕ. Колхозăн туртăм вăйĕ çителĕклĕ, 36 лаша пурте ĕçе юрăхлă. Вĕсем валли тивĕçлĕ таран утă, тĕштырăсем уйăрса хунă. Конюхсем лашасене лайăх пăхаççĕ, вăхăтра шăвараççĕ, апатлантараççĕ. Колхоз çуракинче вăкăрсемпе те усă курма шутлать. 11 вăкăртан 9 вăкăрне кӳлме вĕрентнĕ ĕнтĕ. Халĕ татах икĕ вăкăра вĕрентеççĕ. Çураки вăхăтĕнче пĕрлешӳллĕ столовăй пулать, уя валли çителĕклĕ таран апат-çимĕçсем уйăрса хунă.

Колхоз хĕллехи агротехникăллă мероприятисене лайăх пурнăçласа пырать. Ку таранччен хире 1470 лав тислĕк кăларнă. 30 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 34 центнер кĕл пухнă. 30 гектар çинче юр тытса хăварнă.

Колхозри агрокружокра вĕренме ялти активистсемпе колхозниксене явăçтарнă. Ку таранччен 3 занятти туса ирттернĕ. Кружока пĕлӳ тĕлĕшĕнчен малта тăракан А. Охильков юлташ ертсе пырать. Вĕсем ку таранччен вăрлăхсене яровизацилесе акасси тата удобренисем усси çинчен вĕренчĕç. Занятисем план тăрăх йĕркеллĕ пулса иртеççĕ.

Кунта агитациллĕ-массăллă ĕçе те кирлĕ вырăна лартнă. Кашни уйăхра стена хаçачĕ кăларса тăраççĕ. Агитаторсем колхозниксене Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене тата тĕнчери хыпарсене каласа параççĕ. Ку ĕçре уйрăмăнах комсомолецсемпе çамрăксем тăрăшса ĕçлеççĕ.

Колхоз çуракин ĕç планне туса пухура çирĕплетрĕ. План тăрăх çуракине 7 ĕç кунĕнче туса ирттерме палăртнă. Ĕçе лайăхрах организацилес шутпа бригадăсене 2—3 звенона уйăрнă. Çавăн пекех суха тăвакансене, тырă акакансене, уя вăрлăх турттаракансене уйăрса тухнă. Кашни колхозник мĕнле ĕçсемшĕн ответлă пулса тăнине ăнлантарса панă.

Колхоз председателĕ Е. Чурмаков юлташ, хăй ватлăхалла сулăннине пăхмасăрах, колхозра большевикла йĕрке тăвассишĕн тăрăшать. Час-часах бригадирсене пухса канашлусем ирттерет. Çав канашлусенче ĕçри çитĕнӳсемпе çитменлĕхсене палăртса, вĕсене пĕтермелли майсене кăтартса парать. Çапла Услă Пукаш колхозĕ çуракине тĕплĕн хатĕрленсе пырать. Колхоз çак çитĕнӳсене колхозниксен пĕтĕм вăйне мобилизациленипе тата бригадăпа бригада, звенопа звено хушшинче социализмлă ăмăрту сарса янипе тума пултарнă.

Н. АНДРЕЕВ.

Ялхуçалăх машинисене хăвăртрах та тĕплĕн юсамалла

Вăхăт кĕтсе тăмасть. Машинăсемпе плугсене халех юсаса çитермелле. Вăрлăхсене сортласа тасатса, акма хатĕрлесе хумалла. Çуракине ăнăçлăн ирттерессипе плугсемпе ытти машинăсене тĕплĕн юсаса хатĕрленинчен те нумай килет. Анчах Красноармейски районра плугсемпе машинăсене юсаса хатĕрлес ĕç пур çĕрте те лайăх пырать теме çук-ха. Чылай колхозсем плугсене юсаса пĕтермен. 29 колхозра ĕç хатĕрĕсене юсасси пачах та начар пырать. «Дружба», «Красный герой», «Унгастрой» тата Крупская ячĕпе тăракан колхозсенче ялхуçалăх машинисемпе плугсене халĕ те юсама тытăнман.

Районра 50 тимĕрçĕ лаççи пур. Вĕсенчен 32-шĕ çеç ĕçлеççĕ. Тимĕрçĕсен вăйĕпе тĕрĕс усă курма пĕлмеççĕ. Иртнĕ çулта «Янмурзино» колхоз тимĕрçи Гордеев юлташ темиçе колхозăн машинисемпе плугĕсене юсаса пачĕ. Кăçал «Чувашия», «Красный боец» колхозсен тимĕрçисем 3—4 колхозăн машинисене юсанă. Анчах вĕсен паха пуçарăвне ытти тимĕрçĕсем хушшинче сарман. Райçĕрĕç пайĕ ку тĕлĕшпе пачах çителĕксĕр ĕçленĕ.

Райçĕрĕç пайĕнчи çынсем тимĕрçĕсен ĕçĕсемпе интересленмеççĕ. Райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ Р. Архипов, заведующийĕ Скворцов юлташсем районра халĕ миçе тимĕрçĕ ĕçленине, иртнĕ çулта çĕнĕрен миçе тимĕрçĕ вĕрентсе хатĕрленине пĕлмеççĕ.

Колхозсен тимĕрçĕ лаççисенче тивĕçлĕ йĕркелĕх, çирĕп дисциплина пулмалла. Юсанă плугсемпе машинăсене комисси тухса актпа йышăнмалла. Иртнĕ çулта «Искра» колхозра юсанă плугсене çуракине тухиччен никам та тĕрĕслемен. Юсав пахалăхĕпе интересленмен. Колхоз председателĕ Васильев юлташ районран пынă çынсене «пирĕн плугсем юсавлă, пурте лайăх», тесе ĕнентернĕ. Анчах икĕ сухаçăн плугсем ĕçе юрăхсăр пулнă. Кăлтăкне тупаймасăр виçĕ кун иртнĕ вара. Тăваттăмĕш кунĕнче тин, колхоз председателĕ урăх ялтан ăстаçă тупса пырсан, плугсене ака вăхăтĕнче тепĕр хут юсанă. Çакăн пек тĕслĕхсем кăçал пулмалла мар. «Унгастрой» колхозра плугсем урам хушшинче, колхоз правленийĕн канцелярийĕнчен инçех те мар, юр айĕнче лараççĕ.

Ялхуçалăх машинисене вăхăтра юсамалла, типтерлĕ тыткаламалла, кашни колхозникпе колхозницăн ответлăха туйса ĕçлемелле.

С. ШАДИН.

Совет Союзĕ тăрăх

Укçапа япаласен 4-мĕш лотерейин выляvĕ вĕçленнĕ

Укçапа япаласен 4-мĕш лотерейин 10 кун хушши пынă выляв, мартăн 24-мĕшĕнче вĕçленнĕ.

Выляври 1.140 миллион тенкелĕх 5.700 пин выигрыш пулнă. Вĕсем хушшинче —500 выигрыш 50.000-шер тенкелĕххисем. 4.200 выигрыш 25.000-шер тенкелĕххисем. 8.000 выигрыш 10.000-шер тенкелĕххисем. Япалаллă выигрышсем хушшинче каракультен çĕлетнĕ хĕрарăм пальтисем—500, хĕрарăмсен хĕлле тăхăнмалли пальтисем (хăмăр тилĕ тирĕнчен тунă воротниклисем) —700, ылттăн сехетсем—2.000, арçынсен хĕлле тăхăнмалли пальтисем—2.000, арçынсемпе хĕрарăмсен костюмĕсем—6.000, костюм çĕлетмелли матери тăрăхĕсем — 44.000, атă-пушмак—10.000 мăшăр.

Выигрышсене вĕсен таблицине Мускаври хаçатсенче пичетлесе кăларнă хыççăн тӳлеме пуçлаççĕ. (ТАСС).

Перекет кассисене хунă укçасем тăрăх выигрышсем

Апрелĕн малтанхи вунă кунĕ хушшинче республикăсен, крайсен тата облаçсен центрĕсенче перекет кассисене хунă укçасем тăрăх черетлĕ выляв пулса иртет. Кашни пин перекет кĕнеки пуçне 25 выигрыш пулать, çав шутран пĕр выигрыш—перекет кассинче 6 уйăх хушши выртнă укçан вăтам суммин 200 процентĕ чухлĕ, икĕ выигрыш—100 процентĕ чухлĕ, 22 выигрыш—50 процентĕ чухлĕ пулать.

Вылява выигрышлă вклад хунă çынсем пурте хутшăнаççĕ. Хальхи вăхăтра çавăн пек çынсем 231.000 ытла шутланаççĕ, вĕсен перекет кассисенче 177 миллион тенке яхăн укçа выртать. (ТАСС).

КАЮМ НАСЫРИ ЯЧĔПЕ ПУЛСА ИРТНĔ НАУКĂЛЛĂ СЕССИ

Мускавра, тутар халăхĕн паллă ученăйĕ, просветителĕ тата педагогĕ çуралнăранпа 120 çул тултарнă ятпа наукăллă сесси пулса иртнĕ.

Сессие С. П. Обнорский академик уçнă. Вăл Каюм Насырие паллă ученый тата писатель, тăван çĕршывăн хĕрӳллĕ патриочĕ тата тутарпа вырăс халăхне пĕрлештерессшĕн кĕрешекен çын тесе хакланă. 50 çул ытла вăхăт хушшинче хăйĕн наукăпа педагогика тата литература ĕçĕнче Насыри математика, астрономи, естествознани, географи тата фольклор ыйтăвĕсемпе 40 статьяпа кĕнеке ытла çырнă. (ТАСС).

РЕСПУБЛИКА ТĂРĂХ

ФРОНТОВИКСЕН АЧИСЕНЕ ПУЛĂШАÇÇĔ

КУСЛАВККА. «Путь Маркса» колхозра фронтовиксен ачисене тăтăшах пулăшса тăраççĕ. Колхоз кăçал вĕсене 70 метр матери, 11 тутăр, 6 мăшăр алшиш, 9 мăшăр перчатка тата ытти япаласем те туянса панă.

ÇĔНĔ ТРАКТОРИСТСЕМ

ЕЛЧĔК. Çак кунсенче куинти МТС-ра 37 çынна тракторист пулма вĕрентсе кăларнă. Захаров, Васильев, Перепелкин юлташсем уйрăмах лайăх вĕренсе тухнă.

КОНСУЛЬТАЦИ СĔТЕЛĔ УÇНĂ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Район центрĕнчи клубра законсене ăнлантарса паракан сĕтел уçнă. Консультацисем эрнере икĕ хут пулаççĕ. Совет законĕсем пирки ĕççыннисем паракан ыйтусем çине адвокат Яковлев юлташ тивĕçлĕ ответсем парать.

ÇĔНĔ БИБЛИОТЕКА

МУРКАШ. Çак кунсенче Муркашра районри библиотека уçăлнă. Библиотекăра çĕнĕ кĕнекесем пине яхăн шутланаççĕ. Вĕсен шутĕнче ют çĕршывсенчи, Совет Союзĕнчи паллă писательсен произведенийĕсем пур. Вулакансен йышĕ те ӳссех пырать.

ЛИТЕРАТУРА КРУЖОКĔ

СОВЕТСКОЕ. Хучашри вăтам шкулта вĕренӳ çулĕ пуçланнăранпах литература кружокĕ ĕçлет. Ку таранччен 10 занятти ирттернĕ. Вĕсенче Ванда Василевскаян «Радуга», Б. Горбатовăн «Непокоренные» произведенийĕсене вуласа тухнă.

Кружока чăваш чĕлхипе вĕрентекен Л. Петров юлташ ертсе пырать.

ЦЕХРИ ЛИТКРУЖОК

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Ворошилов ячĕпе тăракан артельти столяр цехĕнче литература кружокĕ организациленĕ. Ăна çак цехăн бригадирĕ Н. Петухов юлташ ертсе пырать. Литкружокăн хăйĕн ĕç планĕ пур. Занятисем çав план тăрăх пулса иртеççĕ. Занятисенче кружок членĕсем çырнă сăвăсемпе калавсене, вырăс тата чăваш писателĕсем çырнă произведенисене вуласа тухса сӳтсе яваççĕ.

«БОЛЬШЕВИКЛА КОЛХОЗШĂН» ХАÇАТ 10 ÇУЛ ТУЛТАРНĂ

ТАВАЙ. ВКП(б) райкомĕпе райсовечĕн органĕ—«Большевикла колхозшăн» хаçат тухма пуçланăранпа кăçалхи февраль уйăхĕнче 10 çул тултарнă. Вунă çул хушшинче пурĕ 969 номер тухнă.

ПĔР СУРАХРАН 4 ПУТЕК

ИШЛЕЙ. Чаканар ял Советне кĕрекен «Верный путь» колхозра Ф. Курбатова колхозницăн пĕр сурăхĕ 4 путек тунă. Путекĕсем пурте сывах çитĕнеççĕ.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН. мартăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: союзниксен çарĕсем хăйсен Руртан çурçĕртерехри укрепленийĕнчен ăнăçлăн малалла куçса пынă. Реесран çурçĕртерехре союзниксен çарĕсем Эммерих хули хĕррине пырса тухнă тата Иссельбург хулине йышăннă. Унтан хĕвелтухăçнерехре союзниксем Дорстенăн Липпе каналĕнчен çурçĕртерехри пайĕ патне хăвăрт куçнă. Çак каналтан кăнтăрарахра союзниксем виçĕ хула тытса илнĕ.

Унтан кăнтăртарахра союзниксен танковăй чăсĕсем, хĕвелтухăçнелле куçса пыраканскерсем, Рейн шывĕнчен 104 километр хĕвелтухăçнерехре ларакан Гиссен хулине пырса кĕнĕ тата Гиссентан 13 километр çурçĕртерехре ларакан Беллингаузен хулине пырса кĕнĕ. Отрядсенчен пĕри Гиссен хулинчен 10 километр кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре ларакан Лих хули хĕррине кĕрсе кайнă. Вăл отрядсем 43 километр малалла куçнă. Гиссен хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре Вейльбург хулине йышăннă. Союзниксен танковăй отрячĕсем икĕ тĕлте Лан шывĕ урлă каçса кайнă.

Боппарт хулинчен хĕвелтухăçнерехре Рейн шывĕ урлă каçса кайса, союзниксен чăсĕсем Висбаденран 16 километр çурçĕр-хĕвеланăçнерехри Геннеталь хули патне çитнĕ. Унтан кăнтăртарахра союзниксен çарĕсем тата тепĕр тĕлте Рейн шывĕ урлă каçнă, тăшмантан виçĕ хула тытса илнĕ тата Висбаден хулине кĕрсе кайнă. Тăшман вăйлăн хирĕç тăрса кĕрешнине çĕмĕре-çĕмĕре, союзниксен пехотăпа танковăй чăсĕсем Майн çинчи Франкфурт хулин çуррине тасатнă. Кунтан хĕвелтухăçнерехре ларакан Ханау хулине тăшмантан тасатнă. Ханау хулинчен çурçĕртерехре союзниксен танковăй отрячĕсем Над-Наугеймран 10 километр кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре ларакан Нидерфлорштадт хули хĕррине çитнĕ.

Дармштадт—Маннгейм районĕнче союзниксем хăйсен укреплениине аслăлатса пынă. Халĕ вăл укреплени 500 тăваткăл километр çĕр йышăнса тăрать. Рейн шывĕ урлă хывнă темиçе юсавлă кĕпере тытса илнĕ. Çав укрепленирен малалла куçакан союзниксен чăсĕсем Майн шывĕ çинче Нидернберг хули патне çитнĕ тата Гроссумштадт хулине йышăннă.

Оденвальд районĕнче союзниксем вăраххăн куçса пынă, çапах та вĕсем 20 хулана яхăн тытса илнĕ. Маннгейм хулин çурçĕр пайне тăшмантан тасатса пĕтернĕ.

Мартăн 27-мĕшĕнче союзниксен çарĕсем хĕвеланăç фронтĕнче 17.039 çынна тыткăна илнĕ.

БЕРЛИНПА ГАННОВЕРА ТАПАННИ

ЛОНДОН, мартăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсен Францири стратегиллĕ сывлăш-çар вăйĕсен штабĕ официальнăй йĕркепе пĕлтернинче каланă тăрăх, мартăн 28-мĕшĕнче ирхине 950 бомбардировщик ытла, 350 истребитель ытла хӳтĕлесе пынипе, Берлинпа Ганноверти çар завочĕсене тапăннă.

НИМĔÇСЕН ДАНИРИ ÇАР ЧĂСĔСЕНЧИ ПĂЛХАВСЕМ

ГЕТТЕБОРГ. мартăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта çитнĕ хыпарсем тăрăх, юлашки вăхăтра нимĕçсен Данири çар чăсĕсенче пăлхавсем тума хăтланнисем нумай палăрнă. Мартăн 25-мĕшĕнче каçхине тата мартăн 26-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Копенгаген хулинче пăлханакан чăссемпе эсэсовецсем пĕр-пĕрин çине персе тăнă. Нимĕç казармисен районĕнче пăлхавçăсене çĕмĕл тупăсемпе те пенĕ. Хулари площадьсенчен пĕринче нимĕçсен хирти полицийĕпе çар чăсĕсем пĕр-пĕрипе çапăçса илнĕ.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ШВЕЙЦАРИРЕ ПЫТАНАÇÇĔ

ЛОНДОН, мартăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, çак кунсенче Цюрих хулинче тухакан «Тат» журнал нимĕçсен чиккĕри хуралĕпе полицейскийĕсем Швейцарие тарни çинчен статья пичетлесе кăларнă. Гитлеровецсем Швейцари чиккине пынине кăтартакан фотоӳкерчĕксем журналăн пĕр страницине пĕтĕмпех йышăннă. Статья авторĕ каланă тăрăх, Германирен Швейцарие каякан поездсем çумне эрнере темиçе хут санитари вагонĕ кăкараççĕ. Çавăн пек поезд Австрипе Швейцари чиккинчи Санкт-Маргеретен станцине çитсен, нимĕç поездĕнчи «чирлĕ çынсене» Швейцари поезчĕ çине лартаççĕ те нимĕçсен Швейцарири 15 санаторийĕнчен пĕрине илсе каяççĕ. «Тат» журнал çырнă тăрăх, çав чирлĕ çынсен «нимĕç-кусĕсем сывă çынсенни пекех». Журнал ним пытармасăрах çапла калать: «Çакă вăл—нацистсене Германирен тарма пулăшакан майсенчен пĕри пулса тăрать», тет.

ВЕНГРИРИ ГЕСТАПОРА ТУПНА ДОКУМЕНТСЕМ

ДЕБРЕЦЕН. мартăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). «Непсава» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Будапештри полици аллине Шваб (Швабкедь) сăрчĕ çинче ĕçлесе тăнă Венгри гестапин докуменчĕсем лекнĕ. Папкăсенчен пĕринче, «секретно» тесе çырнăскерĕнче, 1940 çулхи совет миссийĕн сăнӳкерчĕкĕсене тата списокĕсене тупнă. Мисси сотрудникĕсене пурне те, посланникрен пуçласа кухаркăна çитиччен, гестапо агенчĕсем сăнаса пыраннă. Вырăс дипломачĕсем хыççăн 5 агент хыçранах çӳренĕ, çав вăхăтрах правительство хаçачĕсем Совет Союзне пур енчен те мухтанă.

Материалсем кăтартнă тăрăх, гестапо агенчĕсем дипломатпа политиксен ĕçĕсене кăна мар, писательсене тата литературăпа искусствăн ытти деятелĕсене те сăнаса пынă. Венгри гестаповецĕсем Будапештран тухса тарнă чухне государство укçине 2 миллион пенго вăрланă.

РУМЫНИРЕ «ЙĂЛТАХ ФРОНТ ВАЛЛИ» ТЕКЕН КАПМАНИ АНĂÇЛĂ ИРТЕТ

БУХАРЕСТ, мартăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). «Скынтея» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Альба-Юлия кăмрăк районĕнчи рабочисем, Румынин пĕтĕмĕшле ĕç конфедерацийĕ чĕнсе каланине хапăл туса, фронта пулăшмалли фонда 14 миллион лей укçа панă. Çав укçана вĕсем 8 сехет хушши ĕçлесе тупнă. Хаçат «Йăлтах фронт валли» текен фонда укçа панă суту-илӳ предприятийĕсен списокне пичетлесе кăларать.

ВАЙДА-ВОЙВОДАНА АРЕСТЛЕНИ

БУХАРЕСТ, мартăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). «Ромыниа Либера» тата «Скынтея» хаçатсем ĕнер Сибиу хулинче Вайда-Воеводăна арестлени çинчен пĕлтернĕ. Вайда-Воевода вăл премьер-министр пулнă, вăл тимĕр гварди (Румынири фашистла организаци) организациленĕ тата 1933 çулта Гривицара чугун çул рабочийĕсене вĕлерессине организацилекенни пулнă.

АРГЕНТИНА ПРАВИТЕЛЬСТВИ ЙЫШĂННИ

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ Буэнос-Айресран пĕлтернĕ тăрăх, Аргентина правительстви тĕнĕл державăсене хирĕç вăрçă пуçлани çинчен официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ.

САН-ФРАНЦИСКО ХУЛИНЧЕ ПУЛСА ИРТМЕЛЛИ КОНФЕРЕНЦИЕ АЛБАНИЕ ЧĔНМЕ ЫЙТНИ

БЕЛГРАД, мартăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Тирана хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, пĕтĕм Албанийĕпе йышлă митингсемпе демонстрацисем пулса иртеççĕ, вĕсенче Сан-Франциско хулинче пулса иртмелли конференцие Албание чĕнме ыйтаççĕ. «Башкид» хаçат мартăн 23-мĕшĕнче çапла çырнă: «Халăхăн çакăн пек пысăк демонстрацийĕсене Албани ку таранччен нихăçан та курманччĕ-ха», тенĕ. «Пирĕн халăх,—çырнă малалла хаçат,—фашизма хирĕçле блокăн аслă ĕçĕ тĕрĕс пулнине çирĕп ĕненсе кĕрешĕве тытăнчĕ. Хăйĕн правительствине йышăнма ыйтнипе пĕрлех, вăл Сан-Франциско хулинче пулса иртмелли конференцие Албание чĕнме ыйтать. Çакă вăл унăн фашизма хирĕç вирлĕн кĕрешсе илнĕ прависенчен пĕри пулать. Фашизма хирĕçле блока кĕрекен халăхсемпе пĕр пулса кĕрешнине пула, Пĕрлешӳллĕ нацисен конференцийĕнче пулас правăна союзниксем унран тытса илес çуккине пирĕн халăх пĕлсе тăрать», тенĕ.

РУЗВЕЛЬТ КОНГРЕСА ЯНĂ ÇЫРУ

ВАШИНГТОН, мартăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). (Вăхăтра çитереймен). Конгреса янă çырура Рузвельт президент апат-çимĕçпе ялхуçалăх ыйтăвĕсемпе ĕçлемелли пĕтĕм тĕнчери организацие Пĕрлешӳллĕ Штатсем хутшăннине тата вăхăтлăх комисси хатĕрленĕ устава ырлама сĕннĕ.

ПАРЛАМЕНТРА ПАНА ЫЙТУСЕМ ÇИНЕ КОЙСО ОТВЕТ ПАНИ

ТОКИО, мартăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Аялти палатăн бюджет комиссийĕн ларăвĕнче мартăн 22-мĕшĕнче Макино çапла ыйтнă: правительствăна туса хунăранпа вăл мĕн-мĕн тума пултарчĕ? Правительствăн, хăйĕн политикине улăштарса, пĕтĕм ĕçе çĕнĕрен пуçламалла мар-ши?—тенĕ.

Койсо премьер çапла ответленĕ: «Кабинета туса хунăранпа вара халăха вăрçă ыйтнă пек воспитани парса пынă, анчах халĕ халăх кăмăлĕ хавшанине пытарма май çук. Производствăна илес пулсан, пĕр вăхăтра вăл чакнăччĕ, анчах халĕ каллех вăрçăченхи шая çитрĕ», тенĕ.

Малалла Макино халăх вăрçă ĕçĕ çине шанмасăр пăхни çинчен, çакă вăл политикăри çитменлĕхсенчен килни çинчен каланă, правительствăн халăха мĕн май килнĕ таран чăн-чăн лару-тăру çинчен каласа памалла, тенĕ. Койсо çапла ответленĕ: «Бомбăсем пăрахнине пула мĕн чухлĕ çухату пулни çинчен халăха пĕлтермелле тенипе правительство килĕшет, ку тĕлĕшпе малалла правительство тивĕçлĕ ĕçсем тума шутлать. Анчах чăннине каласа пани тăшмана пулăшма тата çĕршывăн вăйне пĕтĕçтерессине чăрмантарма пултарать», тенĕ.

Малалла Макино çĕршывра лăпкăлăх тата йĕркелĕх тытса тăма май пурри çинчен ыйтнă. Койсо çапла ответленĕ: вăрçă хĕрсе пынăçемĕн çĕршыври лăпкăлăх тата йĕркелĕх хавшанма пултараççĕ, анчах та правительство йĕркелĕх туса хурас тĕлĕшпе кирлĕ мерăсем йышăнать, тенĕ.

Ют çĕршыв хроники

* Лориана гаванĕнче (Франци Атлантика океанĕн сыранĕ) Америка артиллерийĕ Германин 7.000 тонна таякан суднине путарнă. Вăл судно çав портра хупăрласа илнĕ Германи гарнизонĕ валли апат-çимĕçпе боеприпассем илсе пыма хăтланнă.

* Францин финанс министрĕ Плевен тата Англин финанс министрĕ Андерсон финанс килĕшĕвĕ тунă. Çак килĕшӳ Англипе Франци хушшинчи суту-илĕве йĕркелесе яма тивĕçлĕ финанс никĕсĕ туса парать.

* Венгрин Вăхăтлăх Правительстви Венгрин ĕлĕкхи правительствисем еврейсене хирĕç йышăннă законсене пурне те пăрахăçа кăларнă.

* Монтгомерин хирти штабне кайнă хыççăн Черчилль Англие таврăннă.

* София хулинче Болгарири рабочи çамрăкĕсен союзĕн 5-мĕш конференцийĕ уçăлнă.

* Финсен художествăллă академийĕн çуртĕнче «Сталинград — Ленинград—Севастополь» ятлă выставка уçăлнă. Выставкăна «Финлянди—Совет Союзĕ» ятлă общество организациленĕ.

* Нимĕçсем Голланди патриочĕсене 400 çынна вĕлернĕ.

* Францири поляк организацийĕсем Польшăна ура çине тăратмалли фонда çур миллион франк ытла укçа пухса хывнă.

* Белграда Францин çар миссийĕ пынă.

* Иракра Англи посолĕ пулнă Корнуоллиса Ирак регенчĕ патне США-ран каялла таврăннă чухне Англи королĕпе королевин патне кĕрсе тухма чĕннĕ.

* Çурçĕр Трансильванири Клуж хулинче венгерсемпе румынсен университечĕ уçăлнă. Университетра венгер тата румын чĕлхисемпе вĕрентмелле. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Комсомолецсемпе çамрăксем çуракине хатĕрленес ĕçре

Комсомол организацийĕсен колхозсене çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе ĕçлĕн пулăшса пымалла. Вăрнар районĕнчи комсомолецсемпе çамрăксем çакна лайăх ăнланса илнĕ.

Ялсенчи çамрăксене вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçе мобилизацилес тĕлĕшпе комсомолăн Сталин ячĕпе тăракан колхозри, Уравăшри «1-ое мая», Вăрманкасри «Самолет», Хирпуçĕнчи «Победа» колхозсенчи организацийĕсем уйрăмах тимлĕн ĕçленине палăртмалла.

Çуракине ăнăçлăн ирттерессипе тракторсемпе ялхуçалăх машинисене лайăх пахалăхпа юсаса хатĕрленинчен чылай килет. МТС-ри комсомолецсем çакна аван ăнланаççĕ. Организацире пурĕ 13 комсомолец. Пурте вĕсем ĕçре пример кăтартаççĕ. ВЛКСМ организацийĕн секретарĕ Войнова юлташ мастерскойра токарь пулса ĕçлет. Çак ĕçре вăл кулленхи нормăна 150—170 процентран кая тултармасть. П. Антонов, М. Волкова, Т. Захарова, А. Рамкина, О. Филиппова комсомолкăсем хăйсен тракторĕсемпе инвентарьсене срокчен тата пысăк пахалăхпа юсаса пĕтернĕ. Халĕ вĕсем ытти трактористсене пулăшаççĕ. Кулленхи нормăна 150—200-шер процент тултарса ĕçлеççĕ. Колхозсенчи комсомолецсем те ялхуçалăх машинисемпе транспорт инвентарĕсене юсас тĕлĕшпе ырми-канми ĕçлеççĕ. Комсомолецсемпе çамрăксен вăйĕпе пурĕ 98 сеялка, 944 сӳре, 745 плуг, 1.300 комплект кӳлмелли хатĕрсем, 850 урапа юсанă. Уравăшри «1-ое мая» колхозри комсомолец Иван Няга хăй кăна 24 плуг, 4 сеялка, 3 жнейка, 20 сӳре, 10 урапа юсанă.

Вăрлăх—тырпулăн ылттăн фончĕ. Вăрлăх хатĕрлес тĕлĕшпе те эпир колхоз правленисене чылай пулăшрăмăр. Кашни колхозрах лайăх пахалăхлă вăрлăх хатĕрлес тата вăрлăх фондне лайăх сыхласа усрас енĕпе комсомолецсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Вăрлăх сортлас тĕлĕшпе 27 çĕрте комсомолецсемпе çамрăксен звенисене тунă. Сталин ячĕпе тăракан колхозра Пупина юлташ ертсе пыракан звено 500 центнер сĕлĕ, 300 центнер тулă, «Победа» колхозри Кузнецова юлташ ертсе пыракан звено 445 центнер сĕлĕ тата тулă вăрлăхĕсене сортланă.

Çуракин ăнăçлăхĕ туртăм вăйĕнчен те чылай килет. Кашни колхозрах лашасене уйрăм комсомолецсем-колхозниксем çумне çирĕплетнĕ. Çапла вара вĕсем лашасене чăн-чăн хуçасем пек юратса пăхаççĕ. Уйхир ĕçĕсем пуçланиччен виçĕ эрне малтан лашасене ĕçрен хăтарса, лайăх апат çине тăратма палăртнă. Çăмăлтарах ĕçсенче усă курма вăкăрсене кӳлме вĕрентеççĕ. Молотов ячĕпе тăракан колхозра А. Михайлов, В. Федоров комсомолецсем иккĕшер вăкăр, «1-ое мая» колхозра Н. Яковлев, А. Осипов комсомолецсем 8 вăкăр ĕçе вĕрентсе çитернĕ.

Çавăн пекех комсомолецсем вырăнти удобренисем хатĕрлес тĕлĕшпе те тăрăшса ĕçлеççĕ. Комсомолецсен вăйĕпе кăна уя 162.304 лав тислĕк кăларнă, 2.424 центнер кĕл, 1.635 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 4340 лав торф хатĕрленĕ. 3.200 гектар çинче юр тытса хăварнă. «Самолет» колхозра Ю. Васильева юлташ ертсе пыракан комсомолецсемпе çамрăксен бригади уя 300 лав тислĕк кăларнă, 96 центнер кĕл пухнă.

Районĕпе пурĕ 22 çĕрте вăйлă тырпул звенисем организациленĕ. Сталин ячĕпе тăракан колхозра 2 звено, Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра 3 звено, «Победа» колхозра 2 звено тунă. Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхозри Миронова юлташ ертсе пыракан звено иртнĕ çулта 6 гектар çинче кашни гектартан 200-шер пăт урпа туса илнĕ. Çак звено кăçал та вăйлă тырпул туса илессишĕн ырми-канми ĕçлет. Кĕркунне вĕсем çитес çуракинче урпа акмалли участока 22 сантиметр тарăнăш сухаланă, юр тытса хăварнă, гектар пуçне 100-шер лав тислĕк кăларнă, пĕрер центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 2-шер центнер кĕл хатĕрленĕ. Çак колхозри Фролов юлташ ертсе пыракан звено та вăйлă тырпул туса илме кирлĕ ĕçсене туса ирттернĕ.

Ялсенче халь мĕнпур массăллă-ăнлантарулă ĕçе çуракине хатĕрленес задачăсемпе çыхăнтарса туса пыратпăр. Районри тата колхозсемпе бригадăсенчи стена хаçачĕсем, вырăнти радио, докладсемпе лекцисем, калаçусем,—çаксем пурте вăйлă тырпулшăн кĕрешес ыйтупа çыхăнса пыраççĕ. Агитаторсем пулса комсомол активĕ, учительсем, ялхуçалăх специалисчĕсем ĕçлеççĕ. Пуçламĕш организацисенче политикăллă-массăллă ĕçĕн планĕсене тунă, агитаторсене, боевой листок тата стена хаçат редакторĕсене уйăрнă. Агитаторсем ялсенче колхозниксене Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене, ялхуçалăх ĕçĕсем çинчен калакан брошюрăсене, наука ыйтăвĕсемпе çырнă произведенисене вуласа параççĕ. Çавăн пекех агрономсемпе зоотехниксен, ялхуçалăхĕнче малта пыракан колхозниксен калаçăвĕсене ирттерме тытăнатпăр. Сухаçăсемпе сӳресĕсем, акакансем хушшинче социализмлă ăмăрту организацилетпĕр. Бригадăсенче кăтарту хăмисем пулаççĕ.

О. ДАВЫДОВА.
ВЛКСМ Вăрнар райкомĕн секретарĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97. промышленность пайĕн — 3—99. ялхуçалăх пайĕн — 5—31. издательство конторин — 0—23

Типография № 1 Управлени полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000

НТ 00302